Теветкел Н. Нарспи шăплăхĕ : [сăвă] / Н. Теветкел // Капкăн. - 2006. - Нарăс (№ 3). - С. 9.

Нарспи йăмра çинчех тăнлать-ха шăплăха…
Анчах та чыссăр ĕç ун сăвапне çухатрĕ,
чунне хĕне-хĕне хăй пурнăçне вăл татрĕ,
çухатрĕ хĕвеле, ыр кăмăллă йăха.
Сетнер пек чухăна ятлакансем те пулĕç –
кам пĕлĕ хаклама ун çынлăхĕн вăйне?
Пуян кил-йыш пуçне çăлас шутпа хăйне
тĕп турĕ вăл, айван. Тен, ĕхĕлтетĕ, кулĕ
усаллăн шăл йĕрсе унран тем чул кÿпшек.
Сисетĕп: çав çынсен чĕлхи - тÿп-тÿп! кÿсек –
Сетнер ĕнси çинче пĕрмай хаяррăн ташлĕ.
Усал ăс-хал ялан инкекпеле юлташлă:
пăтранчăк шыв пекех вăл çаврăнса тăрать,
çав авăра сикме хурланчăк чун хăрать.